***Расторгуева Людмила Григорьевна***
воспитатель
МБДОУ «Д/С №162 «Акварелька»
г. Чебоксары, Чувашская Республика
***Зуева Наталия Алексеевна***
воспитатель
МБДОУ «Д/С №206 «Антошка»
г. Чебоксары, Чувашская Республика
***Леонтьева Марина Николаевна***
воспитатель
МБДОУ «Аликовский Д/С №2 «Хевел»
с. Аликово, Чувашская Республика

# ОРГАНИЗАЦИЯ ДЕТСКОГО ДОСУГА С ИСПОЛЬЗОВАНИЕМ ПРОИЗВЕДЕНИЙ ЧУВАШСКОЙ ЛИТЕРАТУРЫ В ДОО

***Аннотация****: для сохранения интереса к чтению у детей дошкольного возраста используются инновационные методы работы. Одной из форм работы дошкольного учреждения с этой целью является организация досуга детей с использованием произведений чувашской литературы. В таких мероприятиях у детей формируются представления о художественной литературе, развивается устойчивый интерес к игровой деятельности.*

***Ключевые слова****: детский досуг, игровая деятельность, произведения чувашской литературы.*

***Аннотаци:*** шкул çулне çитмен ачасен кĕнеке вулас туртăмне сыхласа хăварас тĕллевпе çĕнĕ ĕç меслечĕсемпе усă кураççĕ. Шкулчченхи вĕренӳ заведенийĕсен çав ĕçсенчен пĕри вăл – чăваш литератури хайлавĕсем тăрăх ирттернĕ кану мероприятийĕсем. Кун пек мероприятисенче ачасем илемлĕ литература произведенийĕсемпе паллашаççĕ, вăйă ĕç-хĕлĕпе интересленни çирĕпленсе пырать.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

***Ключевые слова:*** кану вăхăчĕ, вăйă ĕç-хĕлĕ, чăваш литературин произведенийĕсем.

Юлашки вăхăтра ытларах та ытларах вĕренӳпе ăспару процесĕнче ачан наци туйăмлăхĕ йĕркеленни, халăх культурипе тата йăли-йĕркипе интересленессине çухалса пыракан хаклăхсем урлă тавăрни çине тимлĕх уйăраççĕ. Ачасемшĕн пĕлтерĕшлĕ тата ăса хывма çăмăлрах наци культурин элеменчĕсем шутне юмах, юрă, вăйăсем, халăх пултарулăхĕ, ӳнер, йăла-йĕркесем тата ыттисем те кĕреççĕ. Ачасем вĕсене кăмăлласа йышăнаççĕ.

Çитĕнсе пыракан ăрăва халăх культурипе, тăван тавралăхăн йăли-йĕркипе, хăй халăхĕн чунлăхпа этеплĕх хаклăхĕсемпе паллаштарас ĕç вĕренӳпе воспитанин пур шайĕнче те пулса пымалла. Ку ĕçре шкулчченхи ӳсĕм пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртмалла. Шăпах çак вăхăтра, пурнăçăн малтанхи çулĕсенче, харпăрлăхăн социализаци процесĕнче ача культурăна, хăйĕн тăван чĕлхине, халăхне, тĕрлĕ япаласемпе пулăмсене ырă туйăмсемпе йышăнасси аталанма пуçлать.

Чăваш халăхĕн культури пуян та хăйне евĕрлĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш Ене çĕр пин юрă, çĕр пин сăмах, çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕ теççĕ. Чăваш халăхĕ хăйĕн йăли-йĕркине сыхласа хăварас тесе тăрăшать, çавăнпа та халăх сăмахлăхне тата ăсталăхне хаклă япала пек упрать. Чăваш çĕр-шывĕнче пурăнакансем хăйсен историйĕпе те питĕ интересленеççĕ. «Хăйĕн историне пĕлмен халăхăн пуласлăхĕ çук», – тенĕ ваттисен сăмахĕнче.

Ача садĕнчи пурнăç хаваслă вăйăсемпе кану мероприятийĕсемсĕр, шавлă уявсемпе ăмăртусемсĕр пулма пултарайманнине эпир пурте ăнланатпăр. Вĕсенчен хăшĕсем тавçăрулăха аталантарма пулăшаççĕ, теприсем – ăнкарулăха, виççĕмĕшĕсем вара – ăсра сăнарлама пултарнине. Анчах вĕсене пурне те пĕрлештерсе тăраканни – ачасен хусканусем тăваслăхне тата пурнăçа çĕкленӳллĕ йышăнассине хăнăхтарасси.

Культурăллă кану ĕç-хĕлне йĕркелесси, пушă вăхăтпа усă курасси пĕтĕмĕшле культурăпа, педагогăн пĕлӳ тата ăсталăх шайĕпе, ашшĕ-амăшĕсен эстетика туртăмĕпе, ача садĕнче иртекен мероприятисене килсе курас килнипе


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

тата май пулнипе, шкулчченхи вӗренӳ организацийӗн пурнăçӗнче активлă хутшăнас килнипе тачă çыхăннă. Уйрăмах çакăн пек ӗç-хӗлре кашни ачан пултарулăх енӗсене палăртма, ачана хăйне творчествăри тата пӗлӳри пултарулăхне туллинрех уçса пама май парать.

Социаллă-культурăллă сферăна тӗпчекенсем тата аталантаракансем ачасен канăвне тӗрӗс йӗркелени чылай проблемăсене татса пама пултарнине кура ачасен канăвне йӗркелессине педагогика технологийӗсен уйрăм тӗсӗ тесе те хаклаççӗ.

Юлашки вăхăтра шкул çулне çитмен ачасен вăхăтне усăллă йӗркелесе тӗрлӗ енлӗ аталантарасси çине, культурăллă кану ӗç-хӗлӗнче ашшӗ-амăшӗсемпе ачисен хутшăнăвне çирӗплетесси çине уйрăмах тимлӗ пăхни эпир суйласа илнӗ тема нумайăшне интереслентернине тата вăл актуаллă пулнине çирӗплетет.

Шкулчченхи вӗренӳ организацийӗсенче илемлӗ литературăпа усă курса тӗрлӗ формăллă ӗçсем туса ирттереççӗ: литература утренникӗ, литературăллă пултарулăх концерчӗсем.

Утренниксене ытларах чухне ачасем юратакан пӗр-пӗр писателӗн е поэтăн юбилейне е пултарулăхне халалласа ирттереççӗ. Утренниксен теми çакăн пек пулма пултарать: «Чăваш халăх юмахӗсем», «Чăваш поэчӗсем ачасем валли» тата ытти те.

Утренниксем, писатель е поэт пултарулăхне халалланă кану каçӗсем, юмахсемпе тупмалли юмахсен каçӗсем, литература викторинисем (халăх юмахӗсем тăрăх, пӗр авторăн произведенийӗсем тăрăх, тӗрлӗ писательсен паллă произведенийӗсем тăрăх) ачасене литературăна тата ытларах юратма, ăна лайăхрах ăса хывма пулăшаççӗ. Искусствăн тӗрлӗ тӗсӗсене – музыкăна, илемлӗ литературăпа ӳнер искусствине пӗрлештерни уяв атмосферине савăнăçлăрах тума пулăшать. Литература каçӗсем ачасен хăнăхăвӗсене туллинрех аталантарма, халăх сăмахлăхӗн е писателӗн произведенийӗсемпе интересленнине тата вӗсене юратнине ӳстерме пулăшаççӗ, курни-илтнине çӗнӗлле хаклама май параççӗ, хаваслă кăмăл-туйăм тăваççӗ.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Литературăпа çыхăннă мероприятисем ытларах чухне пĕрлешӳллĕ иртеççĕ, мĕншĕн тесен кунта эпир тĕрлĕ ĕç-хĕл тĕсĕсене (пĕлӳ пухасси, вылясси, музыка) пĕрлештерсе ачасен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене çирĕплетсе хăваратпăр:

– юмахсем çинчен, авторĕсемпе сăнарсем çинчен пĕлнине пĕтĕмлететпĕр, сăмах йышне пуянлататпăр;
– кĕвĕллĕ-ритмикăллă хусканусене çирĕплететпĕр.

Пĕрлештернĕ ĕç-хĕлĕн усси ытларах çакăнта курăнать:

1) вĕренӳ, аталану тата воспитани задачисене пĕрлештерет;

2) ачасене ывăнассинчен хăтарать, мĕншĕн тесен вĕренессипе çирĕплетсе хăварасси вăйăра, хутшăнура, хусканура пулса пырать;

3) темиçе вĕренӳ уçлăхĕн содержанине пĕрлештерме май парать;

4) суйласа илнĕ темăпа интересленме, иртнĕ материал пирки хăйсен кăмăл-туйăмне палăртма май парать.

Шел пулин те, эпир сăнанă тăрăх, шкулччченхи вĕренӳ организацийĕсенче çакăн пек уявсем ытларах йăлана кĕнĕ формăсемпе иртеççĕ. Нумай чухне литература утренникĕ, писатель е поэт пултарулăхне халалланă кану каçĕ, юмахсен каçĕ ирттернине палăртма пулать. Сайра хутра литература викторинисемпе литература концерчĕсем иртеççĕ, тата сайрарах – литература тĕпелĕ.

Пĕрлехи ĕç-хĕлĕн йăлана кĕмен формисем ачасен хăйсен творчество активлăхне ӳстереççĕ. Ку вăл ачасен пултарулăх потенциалне аталантарнă чухне тата ачан пĕтĕмĕшле аталанăвĕнче стимул паракан сăлтав пулса тăрать. Литература уявĕсене йăлана кĕмен формăсемпе ирттерни пурин асĕнче нумайччен юлать, ачасене çĕнĕ произведенисем çакăн пек мероприятисенче активлă хутшăнас тĕллевпе татах вулас е итлес килтерет. Кун пек уявсем илемлĕ литература произведенийĕсене вулассине (итлессине) пурнăçри кирлĕ япала пек хаклама май пАраççĕ, хăйне çывăх çынсемпе (педагогсемпе, тантăшсемпе, ашшĕ-амăшĕпе тата килти ытти çынсемпе) пĕрле кĕнекепе туслашни ырă кăмăл-туйăм атмосфери тăваççĕ.

Литература лотовĕ литература каçĕсен е пысăк литература уявĕсен пайĕ пек пулма пултарать.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Литература ярмăрки – литература уявĕсен йăлана кĕмен формисенчен пĕри. Ярмăркка шутне харăсах пĕр вăхăтра иртекен темиçе пысăках мар тĕрлĕ енлĕ мероприяти кĕрет. Ку уяв вăхăтĕнче литература викторинисемпе конкурсĕсем, интереслĕ çынсемпе (çыравçăсемпе, журналистсемпе, юмахçăсемпе) тĕл пулусем, илемлĕ пултарулăх номерĕсем (сăвăсем вулани, юмах сыпăкĕсене сцена çинче кăтартни, пуканесен вылявне ирттерни, интерактивлă спектакльсем), аниматорсене хутшăнтарнă программăсем, парнесем выляттарни тата ыттисем те иртме пултараççĕ.

Йăлана кĕмен формăллă литература уявĕсенчен интереслĕреххи вăл – литературăри тĕрлĕ темăсем тăрăх йĕркеленĕ вăйă-çул çӳрев.

Литература уявĕ хавхалануллă, çиçкĕн, чуна витерекен уяв пулмалла. Унта ачасен ĕç-хĕлĕн интерактивлă, вăйă тата ытти илĕртӳллĕ формисемпе усă курмалла. Литература уявĕсем ачасен илемлĕ литературăпа кăсăкланассине аталантарать, илемлĕ произведенисене ытларах итлес килнине йĕркелет, таврари ытти çынсене мĕн вулани çинчен каласа парас килнине палăртать.

***Список литературы***


1. Аванесова Г.А. Культурно-досуговая деятельность: теория и практика организации. – М.: Аспект Пресс, 2006. – 236 с.

2. Виноградова Л.А. Культурно-досуговая деятельность дошкольников как образовательное событие / Л.А. Виноградова, Т.М. Нилова, Н.Г. Шейко // Детский сад: теория и практика. – 2016. – №12 (72). – С. 6–13.

3. Гербова В.В. Приобщение детей к художественной литературе. Программа и методические рекомендации. – М.: Мозаика-Синтез, 2006. – 80 с.

4. Зацепина М.Б. Организация досуговой деятельности в дошкольном образовательном учреждении. – М., 2018. – 149 с.

5. Иванова Н.М. Нетрадиционные формы проведения литературных праздников в детском саду / Н.М. Иванова, А.И. Воронина // Образование: прошлое, настоящее и будущее: материалы I Междунар. науч. конф. (г. Краснодар, август 2016 г.). – Краснодар: Новация, 2016. – С. 30–32.




Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

6. Муличенко В.М. Место художественной литературы в досуговой деятельности дошкольника // Детский сад: теория и практика. – 2015. – №3 (51). – С. 100–103.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)